**Тăван тавралăх тирпейлĕхĕшĕн**

# Илемлĕхе – хамăр алăпа

Йывăç лартмалли черетлĕ уйăхлăх хыçа юлчĕ. Унччен-рех ишĕлме пуçланă вырăнсене лартнă хурăнсемпе йăмрасен варкăшĕпе тăван ене çу кунĕсем килсе çитрĕç. Çĕр эрозийĕн хăрушлăхĕ хуçаланнă вăл е ку вырăнсене çак тапхăрта пăхма илемлĕ. Чун çĕкленет, ырă ĕмĕтсемпе пурăнас, аталану сукмакĕпе утăмлас килет.

Çăва кĕнĕ май çуркуннехи йывăççем лартмалли уйăхлăха пĕтĕмлетес килет. Çак тапхăрта кăçал ял тăрăхĕсен администрацийĕсем пĕтĕмпе 18495 тĕп йывăç ларттарчĕç, нумай вырăнсем чечексемпе илемленчĕç. Ку ĕçре, ытти çулсенчи пекех, Муркаш ял тăрăхĕ хастар та пуçаруллă пулчĕ, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăчĕ. Çак ырă пуçарăва алла илсе кăçал Ильинка, Хорнуй, Шетмĕпуç, Ярославка ял тăрăхĕсем тăван ене илемлетес тĕлĕшпе иртнĕ çулхисенчен тăрăшуллăрах ĕçлерĕç. Ял тăрăхĕсенчи уйрăм граждансем вара пушшех те тăрăшулăх кăтартрĕç. Нискассинчи Константин Водянов, Кăпасри Зинаида Ягунова, Çатракассинчи Алексей Яковлев йывăç лартас ĕçе хăйсемпе пĕрле ял çыннисене те активлă явăçтарчĕç. Çакнашкал ырă туртăма ырламалла кăна.





Йывăç лартмалли уйăхлăхран шкулсем те айккинче юлмарĕç. Паян манăн вĕсенчен уйрăмах тăрăшуллисене ятранах палăртас килет. Вĕсем: Нискассинчи тата Ильинкăри вăтам шкулсем, Сыпайкассинчи тата Мăн Хураçкари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем.

Умра – Çимĕк уявĕ. Чăваш халăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ уява пурте тирпейлĕхпе кĕтсе илер. Çавăнпа пĕрлех утă çине тухса кайиччен пĕвесене юсасси-тĕреклетесси пирки те манма кирлĕ мар. Ку ĕçре ял тăрăхĕсен администрацийĕсем, ял старостисемпе ялти депутатсем пуçаруллă пуласса шанас килет. Ырă тĕслĕхĕ кунта та пур. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Атикассинче ял старости Игорь Прокопьев тăрăшнипе виçĕм çул ялти пĕве пуçне лартнă хăвасем питĕ лайăх çитĕнсе кайрĕç, çырана аван çирĕплетрĕç. Кăçал вăл пуçарнипех тепĕр пĕвене юсаса тирпейлес ĕççем вĕçленсе пыраççĕ.

Паянхи сăн ӳкерчĕксенче эсир район администрацийĕн ĕçченĕсем Муркашра чечексем лартас ĕçе активлă хутшăннине куратăр. Пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре – экономика пайĕн пуçлăхĕ Э. Симакова. Иккĕмĕшĕнче – асăннă пайăн специалисчĕсем Н. Костина, В. Пушкова, Н. Смирнова.

Куратăр ĕнтĕ, тăван тавралăх илемĕ – хамăр алăра!

**Г. СИМАКОВ,**
**район администрацийĕн çут çанталăк сыхлавĕпе ĕçлекен тĕп специалисчĕ-эксперчĕ.**

**Л.П. Сергеев 80 çул тултарчĕ**

# Муркаш районĕн хисеплĕ çынни

**(Вĕçĕ. Пуçл. 2-мĕш стр.).**
Чăваш лабораторийĕнче ĕçленĕ вăхăтрах 1973 çултанпа Леонид Павлович И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче пуçламăш класс учителĕсене хатĕрлекен факультетăн чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхи кафедрин заведующийĕнче вăй хунă.

1984 çулта Сергеев профессор Чăваш патшалăх педагогика институтне ĕçлеме куçнă. Чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçе çăмăллатас тĕллевпе Леонид Павлович тĕрлĕ программăсем тăвас ĕçе йĕркелет, чăваш чĕлхине вĕренмелли таблицăсем çырать, куçăн мар майпа вĕренекенсем валли хăнăхтарусен пуххисене пичетлет.

Педуниверситетри тапхăр Леонид Павловичшăн питĕ тухăçлă тапхăр шутланать. Л. П. Сергеев профессор ытти авторсемпе пĕрле «Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕ» пичетлесе кăларнă.

Паянхи кун Леонид Павлович – И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш чĕлхи кафедрин хисеплĕ профессорĕ, Чăваш диалектологи лабораторийĕн заведующийĕ. Унсăр пуçне Леонид Павлович Республикăри вĕрентӳ институтĕнче çулсерен учительсене валли лекцисем вулать, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларать. Л. П. Сергеев – чăваш чĕлхеçисен йышĕнче сумлă та анлă тавракурăмлă, пысăк эрудициллĕ тĕпчевçĕ. Тăван чĕлхемĕрĕн тĕрлĕ ыйтăвне тĕпчес, пулас учительсене хатĕрлесе кăларас тĕлĕшпе 60 çула яхăн пĕтĕм вăй-халне парса ырми-канми тăрăшакан ăсчах. Паянхи кун тĕлне 370 ытла тĕпчев ĕçĕ çырса пичетленĕ, çав шутра юлашки çулсенче 2 монографи, 2 энциклопеди словарĕ, тĕрлĕ пособисемпе вĕрентӳ кĕнекисем тухрĕç.

Кадрсене хатĕрлес ĕçе туса пыма та вăхăт тупать паллă ăсчах: вăл пурĕ наукăн 15 кандидатне хатĕрленĕ, халĕ вĕсем республикăри аслă шкулсенче ĕçлеççĕ.

Дегтярев Г.А., филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн чĕлхе пĕлĕвĕ пайĕн ăслăлăх ертӳçĕ сотрудникĕ: «Леонид Павлович пирки пĕр иккĕленмесĕр çапла калатăп: *унпа разведкăна кайма пулать.* Вăл çав тери шанчăклă та шанăçлă çын: кая юлса çӳремест, сăмахне тытать, улталамасть, курнăçланмасть. Сергеев профессор мана сăпайлăхĕпе, сапăрлăхĕпе, ырă кăмăлĕпе, пĕлӳлĕхĕпе хăй патне туртать – унпа хутшăнма яланах кăмăллă. Леонид Павловичпа калаçатăн та кĕлĕ вуланă хыççăнхи пек туятăн: чун тасалать. Пурнăçа çавăн пек çынсем хăт кĕртеççĕ – çут тĕнчене тĕнĕлрен вĕçерĕнме памаççĕ».

Пурнăç малаллах шăвать. Леонид Павловичăн та ума лартнă тĕллевĕсем сахал мар. Эпир ăна паллă кун ячĕпе саламлатпăр, малашне те ăнăçлă ĕçлесе пыма иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăх, ăслăлăхра çитĕнӳсем тума ырă сунатпăр.

**Н. МАТВЕЕВА,**
**И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш чĕлхи кафедрин преподавателĕ.**

**Пирĕн истори – пирĕн кун-çул**

# Шурча вăрçи – тăван ен палли

**(Вĕçĕ. Пуçл. 40-41-мĕш номерсенче).**
Вилнисене нӳхреп пек шăтăк алтса пытарнă. Чăннипе вилнисем 46 çын çеç пулман. Тепĕр çавăн чухлĕ майлах пулнă. Кайран вăрмансенче, çырмасенче сахал мар виле тупнă. Вĕсене никам та шута илмен. Эпĕ пĕчĕккĕ чухне Шурча вăрçинче аманнă çын виллине Лукян варĕ тĕпĕнчи карта çумĕнче тупни пирки калаçатчĕç.

Майăн 23-мĕшĕнче Шурчана тепĕр генерал-майор пĕр рота салтакпа çитнĕ. Салтаксене кашни ялах пăлхава хатĕрлекенсене тытса килме янă.

1842 çулхи декабрь уйăхĕнче арестленĕ çынсене Çĕрпӳре суд тунă. Çакна валли ятарласа виçĕ суд комиссийĕ йĕркеленĕ. Вĕсем тăватă уесра арестленĕ 4 пин ытла çынна – чăвашсемпе мăкшăсене – суд витĕр кăларнă. Судсем йышăннипе 382 çынна ирĕксĕрлесе ĕçлемелли çĕре е салтака янă. 34 çынна Çĕпĕре каторгăна ăсатнă. Ыттисене халăх умĕнче хулăпа 100 хутран 500-ччен çапса асаплантарнă.

Судпа епле пăхса тухни çинчен икĕ тĕслĕх илсе кăтартатăп. Аслă Оринин çыннине Ваçили Иванова çак суд акă мĕншĕн айăпланă. 1842 çулхи май уйăхĕн 15-мĕшĕнче çывăхри ялсенчи хресченсем Шурчари вулăс правленийĕ умне пухăннă. Вĕсен шутĕнче Ваçили Иванов та пулнă. Унта пуçлăхсем кашни ял обществинчех общество çĕр лаптăкĕ кирли пирки, вăл çĕре обществăри хресченсен ĕçлесе памалли, туса илнĕ тырăна «магазин» текен ятарлă складсене хумалли çинчен каланă. Унпа камăн та пулсан акма вăрлăх çитмесен е çавнашкал халăха кирлĕ ытти ĕç тунă чух усă курма пулĕ, тенĕ.

Халăх усă куракан çĕр патшалăхăн. Çĕре йĕркеллĕ тытса тăрассине майлаштаракан орган патшалăхăн пурлăх палати шутланать. Çав органсене халăхăн хăйĕн тытса тăмалла та çавна валли халăхран укçа пуçтармалла пулать тесе ăнлантарнă пуçлăхсем. Халăха ӳкĕтлес енĕпе Очăкасси пачăшки Эминентов уйрăмах хытă тăрăшнă. Пухăннă хресченсем вара çав çĕнĕлĕхсене ырламан, обществăлла çĕр уйăрса парассине (общественные запашки) хирĕç пулнă. «Çав çĕре халăх çĕрĕнчен касса илсе йĕркелесе çитерсен пире, патшалăх хресченĕсене, удельнăй хресченсем евĕр туса хураççĕ те помещиксен алline лекетпĕр», – тенĕ хресченсем. Калаçу вĕриленнĕçемĕн вĕриленсе пынă. Хресченсем тарăхнипе пуçлăхсене кӳренмелли сăмахсемпех ятлама пуçланă. Пуçлăхсем майлă çаптаракан Эминентов пачăшкăна хресченсем тытса хĕнесе пĕтернĕ. Кантурта уйрăмах Аслă Оринин çынни Ваçили Иванов, 33 çулхискер, хытă ятлаçнă, кĕрешнĕ: кантур чӳречипе алăкне ватассипе хăратнă. Иванов хресченсене: «Эсир пуçлăхсене ан итлĕр! Вĕсем халăхшăн ĕçлемеççĕ!», – тенĕ. Каярахпа Ваçили Иванов судра хăйне айăпласа каланине пурне те йышăнман. «Эпĕ ӳсĕр пулнă», – тенĕ вăл. Йышăну вара ун тĕлĕшпе питех те çирĕп пулнă. Суд Иванов Ваçилие пур правасенчен те хăтармалла, пин çынран тăракан строй витĕр тимĕр хулăпа çаптарса кăлармалла та икĕ çуллăха каторгăна ямалла тесе йышăннă.

Губернатор вара суд приговорне çапла улăштарса çирĕплетнĕ: «Ваçили Иванова 500 çынлă строй витĕр тимĕр хулăпа çаптарса кăлармалла та икĕ çуллăха каторгăна ямалла».

Шурча вăрçине пула суд тенкелĕ çине лекнĕ Оринин тăрăхĕнчи тепĕр çын çинчен те каласа хăварас килет. Вăл Çĕньял Орининти 44 çулхи Федот Федоров-Мигопар. Халăха пăтратаканнисем, тĕпрен илсен, 6 çын пулнă. Çавсенчен пĕри шăпах Федот Федоров-Мигопар тесе шутланă аслисем.

Мигопар малтан Шурчара пулнă та унта мĕн пулса иртнине курнă. Кайран, киле таврăнсан, вăл Юнкă-Етĕрне ялĕсене кайса унти çынсене Шурчара мĕн-мĕн пулса иртни çинчен кала-кала панă. «Унта çынсене лашапа таптаççĕ, нумай хресченсене арестлесе хупса хунă», – тенĕ вăл. Çав çынсене çăлма кайма чĕннĕ. Çула тухма мĕнле те пулин хĕç-пăшал (сенĕк, пуртă, çавна майлă япаласем) илме сĕннĕ.

Суд Федот Федоров-Мигопара 500 çынлă строй витĕр тимĕр хулăпа çаптарса кăлармалла та Бобруйск хулине 5 çуллăха ирĕксĕр ĕçлеме ямалла тунă.

Губернатор суд приговорне çапла улăштарса çирĕплетнĕ: «Федот Мигопара хĕнесе наказани памасăрах Çĕпĕре пурăнмалла ямалла».

Суд приговорĕсемсĕр пуçне Шипов генерал: «Шурча вăрçине пула ваннă хĕç-пăшалшăн (хуçăлнă пикăсемпе ваннă пăшал приклачĕсемшĕн) тата пăлхава пула кунта килсе çӳренĕ пуçлăхсене тӳлеме, ытти расхутсене саплаштарма вăрçăна хутшăннă хресченсенчен кашнинчен пĕрешкел (пурĕ 764 тенкĕ те 50 пус) шыраса илмелле», – тесе предписани çырса хăварнă.

Шурча вăрçи пирки ыйтăва пăхса тухсан, аслисем кĕпĕрнери 41 яла шанчăксăр ялсем тесе пĕлтернĕ. Çав ялсен пуçне хура юпасем лартнă. Çав шутра Аслă Оринин ялĕ те пулнă.

Патша тарçисен сучĕ хĕрарăмсемпе ачасене те хĕрхенмен. Аслă Тюмерли ялĕнче общество валли çĕр уйăрма та çĕр улми лартма хирĕç çырнă хут Афанаси Васильев патĕнче упранать тесе тахăшĕ аслисене каланă пулнă. Афанаси Васильев: «Манăн килте ун пек хут çук», – тенĕ. Аслисем унăн килне кайса арăмĕпе ачинчен ыйтнă. Васильевăн арăмĕ Марфа Андреевна, 51 çулхискер тата вĕсен ывăлĕ 14 çулхи Максим Васильев та ун пек хут çук тесе çирĕплетнĕ. Çапах Афанаси Васильева хăйне суд тунисĕр пуçне арăмĕпе ачине те суд тунă. Вĕсене çара ӳт çийĕн пиçĕ хулăпа 25 тата 10 хут çапса асаплантармалла тесе йышăннă. Приговор çине губернатор «Утверждаю» тесе алă пуснă.

Эпĕ пĕчĕккĕ чухне Шурча вăрçи вăхăтĕнче Хуракасси (пасар ялĕ) енчен тупăран пени çинчен те калаçатчĕç. Шурча вăрçине хутшăннă хĕç-пăшаллă вăйсен шутĕнче артиллеристсем те икĕ тупăпа пулнă иккен. Анчах тупăран пени çинчен çырни çук.

Патшалăх пурлăхĕн министрĕ Киселев Шурча таврашĕнчи пăлхава пусăрăнтарни çинчен Пĕрремĕш Николай патшана çийĕнчех пĕлтернĕ. Çав пĕлтерӳ çине Пĕрремĕш Николай патша хăйĕн аллипе «Слава богу! Но подстрекателей примерно наказать в страх другим» тесе çырса хунă.

Çапла вĕçленнĕ пирĕн таврара вун тăххăрмĕш ĕмĕрте пулнă Шурча вăрçи.

**И. ВЯЗОВ.**

**Ыйтусем пур пулсан**

## Граждансене йышăнать

**«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче (районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн çурчĕ) граждансене июнĕн 4-мĕшĕнче 10 сехетрен тытăнса 14 сехетчен Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, политканаш членĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов йышăнать.**

**Объявления**

**Участник долевой собственности Кузяков Сергей Николаевич, 19.01.1980 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Верхние Олгаши, ул. Центральная, д. 15, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**

**2. Кузякову Сергею Николаевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Верхние Олгаши, ул. Центральная, д. 15.**

**Участник долевой собственности Хмелев Александр Анатолиевич, 19.07.1972 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 27, кв. 1, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**

**2. Хмелеву Александру Анатолиевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 27, кв. 1.**

**Участник долевой собственности Акчурин Сергей Михайлович, 09.08.1959 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Ешмолаи, ул. Ешмолайская, д. 18, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Нива», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:050801 площадью 1,22 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**

**2. Акчурину Сергею Михайловичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Ешмолаи, ул. Ешмолайская, д. 18.**

**Участница долевой собственности Яковлева Елена Владимировна, 15.08.1977 года рождения, проживающая по адресу: Республика Марий Эл, Горномарийский район, д. Кожланангер, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Сундырский», участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:061901 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**

**2. Доверенному лицу Ермаковой Зое Георгиевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Б. Сундырь, ул. Новая, д. 32, кв. 13.**